1932 çулхи
июлĕн 27-мĕшĕнче
тухма пуçланă

Шупашкар район хаçачĕ

# ТĂВАН ЕН

22 (9465) № ✵ 2008 çулхи февралĕн (нарăс уйăхĕн) 27-мĕшĕ. Юн кун ✵ Хакĕ ирĕклĕ

**Çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх**

## ПРОГРАММА ПУЛĂШТĂР ТЕСЕН

***Урайсене е стенасене сăрламалла, çивитти улăштармаллла е канализаци шăтса кайнă – управляющи кампани (çав шутра ДЕЗ) çаксене пурне те контрольлесе тăрать. Подрядлă организацисен кашни çулах ăшă кунсем пуçлансан хĕрÿ тапхăр çитет – котелсене хĕле хатĕрлемелле, çуртсенче юсав ĕçĕсене туса ирттермелле. Çулсерен район бюджетĕнчен çакăн валли 2 миллион тенкĕ майлă кĕмĕл уйăраççĕ. Çак сумма кăçал палăрмаллах ÿсме пултарать. Пирĕн район "Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха çĕнетмелли фонд" федераллă программăна кĕнĕ.***

Асăннă программа 2011 çулччен пырать. 1988 çулччен хăпартнă нумай хваттерлĕ, нумай хутлă çуртсене юсама укçа уйăраççĕ. "Кĕске вăхăтра 2008 çул валли юсав ирттерме 60 миллион тенкĕлĕх заявкăсем пухса ĕлкĕрмелле. Ку суммăран 66,8 процентне федераллă фондран, 28,2 процентне республикăри тата вырăнти бюджетран ярасçĕ. 5 процентне нумай хутлă çуртсенче пурăнакансен хăйсен тÿлемелле. Пурĕ 56 çуртра çак программăпа юсав ирттермелле. 60 миллион тенкĕ патнелле – пысăк сумма. Çакă кăçал валли çеç. Çитес çула сумма тата ÿсет", – çапла ăнлантарса пачĕ çĕнĕлĕх пирки район администрацийĕн пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх тата капиталлă строительство управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ С.М.Александрова.

Нумаях пулмасть çак ыйтупа пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх сферинче ĕçлекенсемпе канашлу та иртнĕччĕ. Унта район пуçлăхĕ А.П.Князев акă мĕн каларĕ:

– Иртнĕ çул икĕ миллион тенкĕ район бюджетĕнчен уйăрнă. Кăçал тÿрех – 60 миллион тенкĕ майлă. Миçе пуçа ыраттаракан точкăна пĕтерме пултаратпăр эпир, – пуçларĕ калаçăва Анатолий Пантелеймонович. – Халĕ ниме пăхмасăр хутсемпе ĕçлес пулать. Подрядлă организацисен хăйсем пăхса тăракан кивĕ çуртсене пăхса çаврăнса мĕн-мĕн юсамалли пирки, унта мĕн чухлĕ сумма тухса каясси пирки пĕр пус таранччен кăтартмалла. Сирĕн – питĕ яваплă ĕç. Çак суммăна тăрăшса ĕçе хывса хăварас пулать. Мĕншĕн тесен питĕ çирĕп ыйтаççĕ. Йывăр, анчах пирĕн çак поезд çине сиксе ларса ĕлкĕрмелле. Ку программăна республикипе хуласемпе районсене илсен вуннăшĕ çеç кĕнине те шута илмелле.

"Кивĕ çурт-йĕр" программăна эпир кăçал лекместпĕр. Республика хальлĕхе тÿрех пысăк сумма уйăрма хатĕр марха. Анчах çитес çулах "Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха çĕнетмелли фонд" программăпа паралельлĕ ку программа та пурнăçа кĕме пултарать. Пысăк яваплă ĕçсене пирĕн хатĕрленсе кĕтсе илсе пулать.

А.АРДАЛИОНОВА.

**Инспектор**

## АЧАСЕМПЕ ĔÇЛЕТ



Фото ÿкерчĕкĕ авторăн.

***Шĕнерпуç, Апаш, Çĕньял ял тăрăхĕсенче çул çитмен çамрăксем районти шалти ĕçсен пайĕн инспекторне Ю.Н.Мустаевана курсан аякранах сывлăх сунаççĕ. Юлия Николаевна 2006 çултан вĕсемпе ĕçлет, хăнăхса çитнĕ ĕнтĕ.***

«Май уйăхĕнче ĕçе вырнаçма килсен пуçра пĕр шухăш çеç явăнатчĕ – пултарайăп-ши? Куç хăрать те ал тăвать текен каларăша тĕпе хурса ĕçе пикентĕм», – аса илет инспектор малтанхи уйăхсене. Кĕçех ăна инспектора та куçараççĕ. Ачасемпе ĕçлесси вара Юлия Николаевнашăн çĕнĕлĕх мар – вăл ЧПУра филологи факультетне вĕренсе пĕтерсен шкулта ĕçленĕ. «Хăш ял тăрăхĕнчи ачасемпе ĕçлеме çăмăлтарах?» ыйту парсан инспектор çапла хуравларĕ: «Виçĕшĕнче те çырла мар. 4 шкулта – Тренккасси, Апаш, Çĕньял, Шăмăш – пĕрех хăш вĕренекенĕ те пулин саккуна хирĕçле ĕç тăватех. Апаш тата Шĕнерпуç ял тăрăхĕсемпе условнăй майпа айăпланнисем икшерĕн. Пурĕ виçĕ тăрăхпа 23 ача шалти ĕçсен пайĕнче учетра тăраççĕ. 7 çемьене начаррисен шутне кĕртнĕ».

Ю.Мустаева хăйĕн ĕçĕнчи иртнĕ çулхи кăтартусем çинче те кĕскен чарăнса тăчĕ. 2007 çулта вăл контрольлесе тăракан 3 ял тăрăхĕнче 3 хĕрарăма амăш прависĕр хăварнă. Ашшĕ-амăшĕн тивĕçĕсене пурнăçламаншăн 7 протокол çырнă.

А.СУСМЕТ.

## САВĂНĂÇЛĂ ПУХУ

Февралĕн 22-мĕшĕнче районти культура çуртĕнче Тăван çĕршыв хÿтĕлевçин кунне халалланă савăнăçлă лару иртрĕ. Ăна Кÿкеç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.Вершинин уçрĕ. Пухăннисене уявпа ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ял хуçалăх министрĕ М.Игнатьев, район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А.Егорова, Шупашкарпа Сĕнтĕрвăрри районĕсен çар ĕç комиссарĕ В.Мареев, 1945 çулта Берлина илессиĕн пынă çапăçусене хутшăннă Г.Свинцов саламларĕç, культура çурчĕн артисчĕсем концерт кăтартрĕç.

Ю.МИХАЙЛОВ.

## АКĂШ ТА ПУЛЧĔ

Февралĕн 23-мĕшĕнче Явăшри клубра Тăван çĕршыв хÿтĕлевçин кунне паллă турăмăр. Шкулта ачасене вĕрентекен Н.Петрова çĕршыв хÿтĕлевçисем çинчен каласа пачĕ, Б.Мацко ертсе пыракан ушкăн концерт кăтартрĕ. Ветерансен канашĕн председателĕ В.Иванова «Шурă акăш» ташшипе савăнтарчĕ. Юлашкинчен уява хутшăннисене тутлă апат-çимĕçпе хăналарăмăр.

И.КИРИЛЛОВА.

## ФРОНТОВИКПЕ КАЛАÇНĂ

...Кÿкеçри 1-мĕш шкулта вĕренекенсем февралĕн 22-мĕшĕнче иртнĕ тĕл пулура. Тĕлĕннĕ те, ара, ăна чылайăшĕ курман-çке. Ку вăл – Кÿкеçри Г.Свинцов (1926 ç.ç.). Ветеран çапăçусен темиçе самантне аса илсе каласа кăтартнă. Шупашкарпа Сĕнтĕрвăрри районĕсен çар ĕç комиссарĕ В.Мареев районтан Раççей Çарне хĕсмете кайнă салтаксем хальхи вăхăтра çĕршыва чыслăн хÿтĕлени çинчен каланă, районти ĕçпе вăрçă ветеранĕсен канашĕн председателĕ И.Павлов тата Г.Герасимов историк район çыннисем Аслă вăрçă çулĕсенче Тăван çĕршыва паттăррăн хÿтĕленине çирĕплетекен тĕслĕхсемпе паллаштарнă.

В.НИКОЛАЕВ.

## ФЕЛЬДШЕР ПУНКЧĔ КИРЛĔ

Чирлес-тăвас пулсан ялти çынсем чылай чухне фельдшер пунктне каяççĕ. Анчах вăл пулмасан мĕн тумалла? Çапла, питех мар.

Ялта фельдшер пункчĕ çукки Мăн Пÿкассисене те самайранах канăçсăрлантарать. Кăçал унта фельдшер пункчĕ тумаллах. Район пуçлăхĕ А.П.Князев кун пирки вырăнти ял тăрăхĕн территорийĕнче Пĕрлехи информаци кунĕ иртнĕ чух каланăччĕ. Объекта çурт-йĕре хăвăрт çĕклеме май паракан технологипе усă курса хăпартĕç. Ăна тума 1,2 миллион тенкĕне кайса ларĕ. Пункта ялти культура çурчĕ умĕнчи лаптăкра вырнаçтарĕç.

В.ЭВЕРККИ.

## ПЕНСИОНЕРСЕН ЗАЯВЛЕНИЙĔ

Федерацири «Раççей пенсионерĕсен союзĕ» общество организацийĕн республикăри регион уйрăмĕн форумĕ иртнĕ. Пирĕн районтан унта çак организацин элчи У.Иванов тата РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕ А.Исаева хутшăннă. Форум Чăваш Енри пенсионерсене тата пурне те Чĕнсе калани йышăннă. Унта юлашки çулсенче çĕршыв экономики палăрмаллах аталаннине, патшалăхăмăр тахçан çухатнă вăйне тавăрнине, Раççей халăхĕ халĕ ыран мĕн кĕтет-ши пире тесе хăраса пурăнманнине, республикăра пурăнмалли çурт, çул тăвас, ялсене газ, çынсене таса шывпа тивĕçтерес, хуласемпе ялсене тирпейлес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттернине палăртнă.

С.СЕРЕГИН.

## КАМĂН ВИТРИ ТУЛЛИРЕХ?

| Хуçалăхсем | Февралĕн 22-мĕшĕнче сунă, кг | | | Сутлăх сĕт хисепĕ, % | Ĕне шучĕ |
|---|---|---|---|---|---|
| | Кашни ĕнерен | | Пĕтĕмпе | | |
| | Кăçал | Пĕлтĕр | | | |
| "Приволжское" | 13,8 | 15,1 | 4840 | 92,8 | 350 |
| "Дружба" | 13,2 | 10,6 | 790 | 91,1 | 60 |
| "Чурачикское" | 11,1 | 10,3 | 4230 | 95,5 | 381 |
| "Слава" | 10,8 | 8,2 | 699 | 84,4 | 65 |
| Ленин ячĕллĕ | 10,4 | 10,6 | 4895 | 85,3 | 470 |
| Куйбышев ячĕллĕ | 10,1 | 10,9 | 1715 | 87,2 | 170 |
| "Атăл" | 9,5 | 5,6 | 1088 | 93,0 | 115 |
| "Искра" | 7,8 | 5,4 | 641 | 86,1 | 82 |
| Свердлов ячĕллĕ | 7,7 | 10,0 | 1378 | 81,3 | 180 |
| "Атлашевский" | 7,3 | 3,8 | 3300 | 81,8 | 450 |
| "Гвардеец" | 5,4 | 7,2 | 250 | 80,0 | 46 |
| "Прогресс" | 3,8 | 5,6 | 527 | 69,6 | 139 |
| "Букет Чувашии" | | | | | |
| АФ филиалĕ | 1,5 | 5,2 | 220 | 86,4 | 147 |
| **Районĕпе** | **9,3** | **8,6** | **24573** | **88,1** | **2655** |

## СУЙЛАВ – ПОЛИТИКА САМАНЧĔ

Тĕнче куç умĕнчех улшăнать. Пирĕн çĕршывра – кăна каламасăр ниепле те май çук – çултан çул граждансене пурăнмалли, çемьене, кил-тĕрĕше çирĕплетсе тĕреклетмелли условисем лайăхланса пыраççĕ пулсан, патшалăхĕ хăй те экономика тĕлĕшĕнчен, çарĕçпе политика енчен тĕнчере унччен хăй йышăннă вырăна тивĕçсе пырать пулсан, тĕнчери ытти çĕршывсен хутшăнăвĕсем, темшĕн, çулсерен япăхланнăçем япăхланса пыраççĕ.

Ют çĕршывсенчи, çав шутра Америкăри аналитиксем те çавнах калаççĕ, сăлтавĕ – хальхи вăхăтра Америкăри пĕрлешÿллĕ штатсенче (АПШ) «неоконсерваторсен» (хăйсем патĕнче вĕсене çапла калаççĕ) политикине тытса пыни. Вĕсен вара: «АПШ – тĕнчере пур енчен те çавнах калаççĕ, сăлтавĕ – хальхи вăхăтра Америкăри пĕрлешÿллĕ»... 

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра).

**Синоптиксем пĕлтерне тăрăх**

***Юн кун, февралĕн 27-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк, кăштах юр çăвать, кăнтăрла **-1** çĕрле **-1**

***Эрне кун, февралĕн 29-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк, кăштах юр çăвать, кăнтăрла **0** çĕрле **−4**

***Кĕçнерни кун, февралĕн 28-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк, кăштах юр çăвать, кăнтăрла **0** çĕрле **0**

***Шăмат кун, мартăн 1-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк, кăштах юр çăвать, кăнтăрла **-1** çĕрле **-4**

Ял хуçалăхĕ

# ÇĔР ĔÇĔН ХĂЙĔН ВĂРТТĂНЛĂХĔ

***Питĕ усăллă та паха иртрĕ кĕçнерни кунхи районти Культура çуртĕнчи канашлу. Унта ял хуçалăх предприятийĕсен ертўçисемпе тĕп агрономĕсем пуçтарăнчĕç. Канашлура ўсен-тăран отраслĕн иртнĕ çулхи ĕç-хĕлне пĕтĕмлетнипе пĕрлех çак отрасльте ресурспа энерги перекетлес технологисемпе тĕрĕс усă курмалли тата ытти çинчен тĕплĕн чарăнса тăчĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕ А.П.Князев, ЧР Ял хуçалăх министерствин çĕр ĕçĕпе инноваци пайĕн пуçлăхĕ А.А.Самаркин тата ыттисем хутшăнчĕç.***

Конференци ўсен-тăран отраслĕн иртнĕ çулхи ĕç-хĕлне пĕтĕмлетнинчен тата кăçалхи çурхи ĕçсене хатĕрленесси çинчен калаçнинчен пуçланчĕ. Ку ыйтупа сăмах илнĕ райадминистрацин ял хуçалăх пайĕн ертсе пыракан агрономĕ А.И.Смирнов ял хуçалăх предприятийĕсенче пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсем иртнĕ çул 14168 гектар йышăннине, çав шутран 1664 гектарĕ кĕрхисем пулнине пĕлтерчĕ. Хресчен-фермер хуçалăхĕсем 250 ытла, çĕр лаптăкĕ çавсен 1265 гектарпа танлашать. Тĕрлĕ ĕçлекен фермерсем пур, лайăххисенчен Ишлейри «Новинка» ассоциаци çурхи ĕçсене çеç мар, вырмана та районта малтан вĕçленĕ. Пĕрчĕллĕ культурăсен тухăçне пысăк илни – Çĕньял ял тăрăхĕнчи Г.П.Зубкова фермер. Кĕрхисем унăн гектар пуçне 29 центнера ларнă. Пахча-çимĕç тата çĕр улми туса илессипе Çĕньялти Ю.В.Петров, Чăрăшкассинчи А.В.Никитин лайăх тăрăшаççĕ. Фермерсем пирки калаçнă май, Алексей Иванович вĕсем хăйсен ĕçĕ çинчен отчетсене кирлĕ пек тăратманнишĕн ўпкелесе илчĕ.

ЧР Ял хуçалăх министерствин пай пуçлăхĕ А.А.Самаркин хăйĕн сăмахне республикăра 75 пин гектар çĕр пушă выртнинчен пуçларĕ. Кун пирки республика ертўçи Патшалăх Канашне янă Çырура та асăннăччĕ. Чăн та, çав çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртсе пымалла. Ун пек тусан тĕштырă туса илессин калăпăшĕ те ўсĕ. Сăмах май, ăна иртнĕ çул Раççейре 81,8 миллион тонна илнĕ, пирĕн республикăра – 372 пин тонна. Кĕрхи культурăсен тухăçĕ яланах пысăкрах пулнине кура хуçалăхсен çавсен лаптăкĕсене ўстерсе пымалла. Иртнĕ çулпа танлаштарса пăхсан, çуртрисемпе кĕрхисен тухăçлăхĕн уйрăмлăхĕ – 5 центнер.


Фото укерчĕке авторăн.

Ўсен-тăран отраслĕ валли патшалăх укçа-тенкĕ уйăрни пирки те палăртса хăварчĕ министерство представителĕ. Хăш культурăна миçе тенкĕ уйăрасси таранах. Çĕнĕ япала шутĕнче – удобренишĕн федераллă хысна шучĕпе субсидилени. Шутлав методикине пĕр гектар сапнă лаптăк пуçне 75 тенкĕпе палăртнă.

«Зала пăхатăп та, 3-4 çамрăк çын ларать. Ыттисенчен чылайăшĕ аслисем, ман пек шурă çўçлисем те пур. Кама хăварăпăр ял хуçалăхне?» Кĕтмен çĕртен çакăн пек сăмахпа пуçларĕ Чăваш ял хуçалăх академийĕн профессорĕ В.И.Мутиков. Ăслăлăх çынни ресурс тата энерги перекетлекен технологипе ĕçлессин уйрăмлăхĕсем çинче чарăнса тăчĕ. Çак шухăшах техника наукисен кандидачĕ С.М.Филиппова та çĕклерĕ. Питĕ усăллă та паха сĕнўсем пачĕç вĕсем. Çавсене агрономсемпе хуçалăхсен ертўçисем ăша хывсан аванччĕ.

Конференцире тухса калаçнисенчен ыттисем те усăллă самантсене палăртса хăварчĕç. «Россельхозцентр» ФПУн филиалĕн ертўçин çумĕ А.М.Титова вăрлăха вăхăтра çĕнетме, лайăх сортсемпе ĕçлеме чĕнсе каларĕ. Ытти ыйтусене те хускатрĕç. Район пуçлăхĕ А.П.Князев районăн пĕтĕмĕшле аталанăвĕпе кĕскен паллаштарчĕ. Çавăнпа пĕрлех тислĕк органикăлла паха удобрени пулнине асăннă май Ленин ячĕллĕ кооператива ырă тĕслĕх вырăнне хурса унпа хуçалăхра лайăх усă курнине палăртрĕ.

Мероприяти тăршшĕпех тĕрлĕ слайд кăтартрĕç. Конференцие райадминистрацин пуçлăхĕн çумĕ – ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ В.Н.Мустаев ертсе пычĕ.

В.ЭВЕРККИ.

# САЛЮТПА ФЕЙЕРВЕК ФЕСТИВАЛĔ

Хăвăрт утассипе Шупашкарта иртекен Тĕнче Кубокĕ Çĕнтерў кунĕ тĕлнелле лекет, çавна май кăçал май уйăхĕн пуçламăшне хăйне майлă ирттересшĕн. Çакăн пирки Чăваш Ен Президенчĕ февраль уйăхĕн пуçламăшĕнче иртнĕ планеркăра каланă. «Шупашкарта тĕрлĕ çыршывран нумай спортсмен килет, вĕсем те Çĕнтерў уявне хутшăнаççĕ. Çавна май тĕп хулара виçĕ куна тăсăлакан салютпа фейерверк фестивалĕ ирттерме палăртатпăр», – тенĕ унта Н.В.Федоров. Ку çеç мар, ăна çулсерен йĕркелессине йăлана кĕртесшĕн. Вăл чăваш çĕрĕ çине çак вăхăтра туристсене ытларах явăçтарма та май парассине шанаççĕ пуçлăхсем.

А.АРДАЛИОНОВА.

# 66-РАН 2-ШĔ РАÇÇЕЕ КАЙĔÇ

Тĕрлĕ предметпа иртекен олимпиадăн районти турĕнче çĕнтернисем, 66-ăн, çулталăк пуçламăшĕнче республика шайĕнче 19 енпе хăйсен пĕлĕвне тĕрĕслерĕç. Ачасем 12 призлă вырăн йышăнчĕç. Вĕсем – Кўкеçри 1-мĕш номерлĕ шкулти А.Степанов; Тутаркассинчи Е.Елизарова; Тренккассинчи С.Васькин, О.Захарова; Чăрăшкассинчи А.Федоров, С.Савельев, Е.Тимофеева; лицейри Н.Шумова, Е.Шутова, С.Петров (2 призлă вырăн); Çатра-Хочехматри А.Кузнецова. Икĕ пĕрремĕш, виçĕ иккĕмĕш, çичĕ виççĕмĕш вырăнсем – çапла хакланă жюри пирĕн ачасен пĕлĕвне. Çĕнтерўçĕсем вара Раççей шайĕнче ăмăртĕç.

А.ПОРТНОВА.

# «ГВАРДЕЕЦРА» ÇĔНĔ ХУÇА ПУЛĔ

Пуçтарма çулталăк, салатма çур талăк тенĕ ваттисем. Шăпах çак каларăш пуçа килет «Гвардеец» ПУП пирки шухăшланă май. Хăй вăхăтĕнче тикĕс аталанса пынă предприятире юлашки вăхăтра производство кăтартăвĕсем начарлансах пычĕç. Иртнĕ çул унта ĕне-выльăх талăксерен вăтамран 103 грамм, сыснасем 23 грамм кăна ўт хушса пынă.

Предприятин акци пакетне аукционра сутлăха кăларнине хаçатра пĕлтернĕччĕ. Эпир пĕлнĕ тăрăх, унта халь çĕнĕ хуçа. Туянаканни – шампиньон ўстерессипе ĕçлекен «Агарикус» общество. Малашлăх плансене вăл халех палăртнă: ўсен-тăран тата выльăх-чĕрлĕх отраслĕсене аталантарасшăн. Çĕр çинче ĕçлеме хăватлă «Джондир» трактор, ытти ял хуçалăх техники илесшĕн, ĕне-выльăх туянасшăн...

В.АВЕРКИЕВА.

# САВĂНĂÇЛĂ САМАНТ. АЛĂРА – ПАСПОРТ

***Ишлей ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Я.В.Кушев Ишлей тата Чурачăк шкулĕсенче пĕрремĕш хут паспорт илекенсене – 20 ытла çамрăка – савăнăçлă лару-тăрура саламланă. Мероприятине РФ Миграци службин районти уйрăмĕн ертўçи В.И.Пыркин, район пуçлăхĕн çумĕ В.М.Сидоров хутшăннă.***

«14 çул тултарнă пур гражданинăн та паспорт пулмалла, палăртнă вăхăт çитсен ăна улăштармалла, çухатсан çийĕнчех пĕлтермелле», – ку ыйтусене яшсемпе хĕрсем хăйсемех хуравланă. «Паспорт пирки ачасем пĕлни савăнтарать. Алăран алла пама юраманнине, салук вырăнне хăвармалла маррине тимлесех итлерĕç», – тенĕ В.И.Пыркин.

А.СУСМЕТ.

# 1730 АЧА ÇЎРЕТ

Юлашки çулсенче ачасем нумайрах çуралма пуçларĕç, çавна май ача сачĕсенче те пĕчĕккисен йышĕ ўсет. Кăçал ашшĕ-амăшĕсем ĕçре чухне районта 1730 ача воспитательсемпе лараççĕ. Иртнĕ çулхи кăтарту – 79 шĕвĕркке сахалтарах. Ишлейри «Буратино», Кўкеçри «Пўрнеске», Тренккассинчи «Родничок» ача сачĕсенче хушма ушкăнсем уçни 5,5 процент ытларах ачасене йышăнма май пачĕ. Апла пулин те районта ача садне вырнаçтарассипе йĕркеленĕ черет тăрать-ха, çавна май пуçлăхсем тата та ушкăнсем уçассипе ĕçлеме палăртаççĕ.

А.АЛИНИНА.

# ШĂМĂШРА ЛАЙĂХ АЛĂК ТĂВАÇÇĔ

Иртнĕ юн кун район пуçлăхĕ А.П.Князев Шăмăш ялĕнче вырнаçнă «Геона» тулли мар яваплă обществăра пулса курчĕ. 2000 çулта йĕркеленнĕ предприятире пўлĕм валли алăк тăваççĕ. Унта усă куракан оборудовани çĕнĕ йышши, вăл – Японире тата Испанире кăларнăскер. Предприятири уйрăм çынсен заказĕпе те ĕçлет. Район пуçлăхĕ продукци пахалăхĕпе кăмăллă пулчĕ.

В.ТИТОВА.

# СУЙЛАВ – ПОЛИТИКА САМАНЧĔ

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).

Пирĕн «ешĕл» демократсене пула ун чухне Америка политики Раççее, ара, питĕ çăмăллăн, çемçе услам çу çине çĕçĕ кĕнĕ пекех кĕрсе кайнă-çке. Вăл кăна та мар, тĕнчере кам «хуçа» пулнине АПШ шăпах ун чухне, 1999 çулта кăтартма пуçларĕ: Европа варринче вырнаçнă пĕчĕк çĕршыва, хăйне нихăш енчен те тĕкĕнмен Сербие, хальхи авиаципе, хĕç-пăшалпа аркатса тăкрĕ.

Çапла вăл тĕнчери хутшăнусенче право тата дипломати меслечĕсене – вăрçă хыççăн йышăннăскерсене – айккине тĕксе хурса вăйпа хăратса тăрассине мала лартрĕ. 2000 çулта влаçа килнĕ республиканецсем ку политикăна савăнăçпах хăйсене илчĕç курăнать: Афганистана аркатса тăкнă хыççăн (2001 çул) сăлтавсăр-мĕнсĕрех Ирак çине кĕрсе кайрĕç (2003 çул), вĕсенче хăйсене кирлĕ правительствăсем лартрĕç.

Халь, акă, эрне каялла, маларах ООНра йышăннă (çав шутра хăйсем те) документа (1244-мĕш резолюцие) шута илмесĕр Серби провинцийĕ – Косово – хăй тĕллĕн патшалăх пулса тăни çинчен пĕлтернине пĕр тăхтаса тăмасăр йышăннă. Çапла Америка ертўçисем тĕнчери лару-тăрăва пĕр-пĕрне хисеплесе мар, пĕр енлĕн татса парассине право шайне çĕклесшĕн пулни уççăнах курăнать. Çитменнине, Европа патшалăхĕсенчен те нумайăшĕ, хăйсене «вăйлă аталаннă демократисем» текенскерсем, АПШ политикине хирĕç нимĕн те калаймаççĕ те, тăваймаççĕ те. Çапла вара эпир ку тĕлĕшпе иккĕмĕш тĕнче вăрçи умĕнхи лару-тăрăва кĕрсе ўкнĕ тесен те юрать.

Ун чухне те хăйне майлă «выскочка» – фашистла Германи пурне те хăратасшăн пулнă. Халь те Совет Союзĕ арканса кайнипе ăнсăртран «пĕртен-пĕр лидер» пулса юлнă АПШ çав политикăнах пурнăçласшăн. Фашистсен хăйсен идеологийĕ пулнă, вĕсем ăна пытарман. АПШ вара вĕсен йăнăшне шута илнĕ курăнать, хăйĕн тĕп шухăшне питĕ вăйлă пытарать, «демократи», «ирĕклĕх» сăмахсемпе анлă усă курать. Ĕçне вара, тĕрĕссипе, çав хура ĕçех тăвать.

Çапла вăл тĕнчери пĕр тикĕс аталанас, мирлĕ, хăйсем тĕллĕн пурăнас текен патшалăхсемшĕн чăн-чăн хăрушлăх пулса тăчĕ. Çакăн пек лару-тăрура иккĕмĕш тĕнче вăрçи умĕн те халăхсем Совет Союзĕ çине пăхнă. Халь пушшех те Раççей çине пăхаççĕ.

Çакна шута илсе калама кирлĕ-ши паянхи кун, информаци питĕ анлă та хăвăрт сарăлнă чухне, эпир хамăр патăмăрта мĕнле сасăлани тĕнчери пур кĕтесре те питĕ вăйлă интереслентернине?.. Мĕншĕн тесен суйлав вăл – политика саманчĕ. Халăх мĕнлерех сознательнăй пулнине, патшалăх политикине, çав шутра тулашрине те, пĕр евĕрлĕ е пăтравлă курнине кăтартса парать. Мĕн чухлĕ нумайăн эпир хамăр çĕршывăн ертўçине шанса уншăн сасăлатпăр, çавăн чухлĕ вăл çирĕп кăмăлпа патшалăх интересĕсене вăйлăрах, ăнăçлăрах хўтĕлеме пултарать. Куратпăр, паян пирĕншĕн çакăнтан пĕлтерĕшлĕрех задача та çĕршывра урăх çук ĕнтĕ. Тăватă çулта пĕрре килекен çак ĕçе пирĕн чăннипех те тараннăн ăнланса, кайран намăс ан пултăрччĕ тесе тумалла: пурин те суйлава хутшăнмалла.

Унсăр пуçне çавна та каласшăн. Чăн та, халь пирĕн суя демократи мар, чăн-чăн демократи. Анчах унпа пĕлсе усă курмалла. Сăмахран, шута илер-ха, Раççей Президенчĕ В.В.Путин 2020 çулччен палăртнă Стратегире мĕн каларĕ политика системи пирки. «...Çавăнпа пĕрлех политика партийĕсен Раççей пуласлăхĕ, наци пĕрлĕхĕ, çĕршыв аталанăвĕн тăнăçлăхĕ пирки яваплăха туллин туйса тăмалла. Партисем хушшинчи уйрăмлăхсем хăш чух темле пысăк курăнмасан та çавсем нихăçан та çĕршыва хаос хăрушлăхĕ патне илсе çитермелĕх тăмаççĕ», – терĕ. Ылтăн сăмахсем. Çакна тĕпе хурса эпĕ пурне те – ăнланса суйлава хутшăнакан кашни çыннах, çав шутра халиччен компартипе ЛДПРшăн сасăланисене те, чăннипех пысăк рейтинглă, В.В.Путин кăтартнă кандидатшăн сасăлама сĕнетĕп. Мĕншĕн тесен çакă çеç вăл, ман шутпа, тăватă çулта пĕрре тумалли тивĕçе эпир чăн-чăн граждансем пек туни пулĕччĕ.

В.СОРОКИН, тĕп редактор.

# ЧĂВАШЛА ВĔРЕНМЕ

Вырăс ачисемшĕн чăвашла калаçасси ют чĕлхе пекех шутланать. Вĕсем чăваш чĕлхине те вырăс чĕлхи урлă вĕренеççĕ. Ачасене иккĕмĕш патшалăх чĕлхине алла илме çăмăлтарах пултăр тесе, акă, Чăваш кĕнеке издательстви Г.Абрамова авторăн «1-мĕш класра вĕренекенсен чăваш чĕлхипе ĕç тетрачĕ» пособине кăларнă. Çакă «Чăваш чĕлхи – 1-мĕш класс» вĕрентўпе методика комплекчĕн пайĕ шутланать. Çывăх вăхăтра вăл шкулсене саланĕ.

А.КСЕНИНА.

ВАТЛĂХ ХИСЕПЕ ЮРАТАТЬ

# ТАВА ТИВĔÇЛĔ ЭКОНОМИСТ

***«Кӳкеçри Антонина Борисова, республикăн Министрсен Советĕнче ĕçленĕ Николай Борисов мăшăрĕ, мартăн 1-мĕшĕнче 80 çул тултарать», – тесен никам та ĕненмест. Эпĕ ăна 60-65 çулта çеç тесе шутларăм. Сăнĕпе те, хăйне тыткаланипе те çав çулсенчи хĕрарăма кăна ас илтерет. Апла пулин те пурнăçĕ пуян, юбилей каçĕнче аса илмелли пайтах.***



А.Ф.Борисова.

Пĕр истори çинчен çырса кăтартмасăр чăтаймастăп. Кашнин пурнăçĕнчех пулать вăл – юрату. Платкахĕрĕ Тоня ял хуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухсан Шупашкар районĕçтăвкомĕн ял хуçалăх пайĕнче экономистра ĕçлеме пуçлать, ВЛКСМ Шупашкар райкомĕн инструкторĕпе Николай Борисовпа паллашать, иккĕшĕ туслашаççĕ. Антонина «Красный волгарь» колхозра ĕçленĕ чухне Николай ун патне, Тĕкĕрçе, час-часах пырса çӳрет, Кӳкеçре те тĕл пулсах тăраççĕ. 1954 çулта Николай ăна качча тухма ыйтать.

«Мана кăларма Коля «Победа» автомашинăпа тата ... самосвалпа пычĕ, хăйĕн тăван ялне Типнере лартса кайрĕ, туй кунĕпех кĕрлерĕ, – аса илет Антонина Флегентовна. – Пурте лайăхчĕ, иксĕмĕр те савăнса пĕтерейместĕмĕр... Анчах ман Коля тепĕр икĕ эрнерен, чуп-чуп уйăхĕ пынă вăхăтра, кĕтмен-туман сĕртен чирленипе урараан ӳкрĕ. Ăна килтен çĕклесе тухса автомашина çине лартнă, больницăна леçнĕ. Эпĕ малтанах тин çеç авланнă упăшка мĕншĕн чирленине ăнланман, каччăсем авлансан çапла чирлесе ӳкеççĕ-ши тесе шутласа илнĕччĕ. Сăлтавĕ урăххи пулнă иккен. Пĕрлешнĕ хыççăнах район хаçатĕнче Кольăпа иксĕмĕр çинчен лайăхах мар статья пичетленсе тухрĕ. Упăшкам унпа манран малтан паллашнă иккен те питĕ пăлханса кайнипе кулянма тытăннă, пуçĕ ыратнипе аптраса ӳкнĕ. «Пыллă уйăха» пĕрле ирттерес вырăнне унăн Шемшер больницинче сипленмелле пулчĕ».

Ветерансем Антонина Флегентовна районăн ял хуçалăх управленийĕнче, Муркаш районĕн ял хуçалăх управленийĕн пай пуçлăхĕнче, республикăн Ял хуçалăх министерствинче экономистра тата пай пуçлăхĕнче, упăшки вара Муркаш районĕçтăвкомĕн председателĕнче тата республикăн Министрсен Совечĕн пай пуçлăхĕнче ĕçленине манмаççĕ. Республика экономикине аталантарас енĕпе çитĕнӳсем тунăшăн Антонина Флегентовна «Чăваш АССРĕн тава тивĕçлĕ экономисчĕ» хисеплĕ ят та илме тивĕçлĕ пулнă. 1983 çултанпа тивĕçлĕ канура, пахчара аппаланма юратать, ветерансен пурнăçне хутшăнать.

## УДОБРЕНИ ПУШАТРĔÇ

Февралĕн 21-мĕшĕнче Кӳкеçри ветерансен канашĕн ертӳçи В.Генералова йĕркеленипе поселокри пенсионерсем валли Красноармейскинчен 34 михĕ хутăш удобрени илсе килнĕ. Ăна пушатнине пăхса тăма тӳр килчĕ



В.Генералова удобрени пушаттарать.

ман. Хăш-пĕр пенсионерăн пырса турттарса кайма хевте çитмест. «Килĕсене автомашина тытсах леçсе паратăп», – терĕ ветерансен ертӳçи. Тав тăваççĕ ватăсем В.Генераловăна удобрени илсе килсе панăшăн.

Сывлăх хураленче

# ПАРХАТАРЛĂ ĔÇРЕ ТĂРĂШНĂ

***Кӳкеçри Дария Филипповна Леонтьева мартăн 13-мĕшĕнче 80 çул тултарать. Ăна поселокра лайăх пĕлеççĕ, мĕншĕн тесен мĕн пенсие кайиччен Кӳкеçри аптека заведующийĕ пулнă, çынсене эмелпе вăхăтра тивĕçтерессишĕн нумай тăрăшнă.***

Республикăра Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи хыççăн та фармацевтсем вĕрентсе хатĕрленĕ. Вĕсен Шупашкарти шкулне хупнăранпах çак специальноçа алла илме Чăваш Ен çамрăкĕсен темшĕн республика тулашне кайса çӳремелле. Дария Шупашкарти фармацевтсен шкулĕнче 1945-1948 çулсенче ятарлă пĕлӳ илнĕ. Хыççăнах аптекăра Муркашра – 6, Вăрнар районĕнче 5 çул вăй хунă. Кӳкеçри аптекăра (вăл прокуратурăн хальхи çурчĕн вырăнĕнче вырнаçнă пулнă) 21 çул заведующи пулнă.


Д.Ф.Леонтьева.

«Кӳкеçри аптека Ишлейри, Шемшерти тата Ишекри аптекăсен ĕçне тĕрĕслесе тăнă, – аса илет Дария Филипповна. – Врачсем çырса панă рецептсемпе эмелпе вăхăтра тата туллин тивĕçтерессишĕн тăрăшнă».

Пенсие кайсан та килĕнче алă усса ларман вăл, медицинăн васкавлă пулăшăвĕн диспетчерĕ пулса 8 çул ĕçленĕ. Вăл «Чăваш АССРĕн сывлăха сыхлассин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» тата «Сывлăха сыхлассин отличникĕ» хисеплĕ ятсене тивĕçлĕ пулнă. Хальхи вăхăтра тивĕçлĕ канура, поселокри ветерансен пурнăçне хутшăнма та вăхăт тупать.

Кӳкеçри ĕçпе вăрçă ветеранĕсен канашĕ ăна 80 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлать, сывлăх, канлĕ ватлăх сунать.

## ЮБИЛЕЙСЕМ КĔРЛЕÇÇĔ

Апаш ял тăрăхĕнчи ĕçпе вăрçă ветеранĕсене юбилейсемпе саламласси йăлара. Февралĕн 22-мĕшĕнче шкулпа ял администрацийĕнче бухгалтерта ĕçленĕ Г.Николаева – 70, Ленин ячĕллĕ хуçалăх ферминче нумай вăй хунă Г.Федорова (Паçпак) 75 çул тултарнă. Вĕсене саламларăмăр. Вăрçă ветеранĕсем патне Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен кунĕпе тав хучĕсем ятăмăр.

В.СМОРОДИНОВ,
вырăнти ветерансен ертӳçи.

## ЫЛТĂН ТУЙ

Шоркка станцийĕнчи Арсентий Семеновичпа Александра Егоровна Семеновсем пĕр çемьене пĕрлешнĕренпе 50 çул çитнĕ. Вĕсем аптрамаççĕ-ха, ку çеç мар, тăрăшсах ылтăн туй кĕрлеттерчĕç. Мăшăра Сарапакасси ял тăрăхĕнчи культура ĕçченĕсем Ю.Андреев, С.Толстова, А.Гаврилова тата З.Петрова юрă-ташăпа савăнтарса саламларĕç.

А.ГАВРИЛОВА.

Çынсем тата çулсем

# ПĔРРЕМĔШ ПИОНЕРСЕМ

Шорккара çуралса пурнăçне унтах вĕçленĕ Павел Трифонов тавра пĕлӳçе "Тăван Ен" вулакансĕсем астăваççĕ пулĕ. Унăн статйисем иртнĕ ĕмĕрте "Ленинецра", республика хаçачĕсенче час-часах кун çути куратчĕç. Вăл 1930-мĕш çулсенче колхозра комсомол ячейкин секретарĕ пулнă, Шупашкарти рабфакра, пединститутра вĕреннĕ, Тăван çĕршыва нимĕç фашисчĕсенчен хӳтĕлеме хутшăннă, Çĕньялти шкулта нумай çул истори вĕрентнĕ.

1925 çулта Шорккара пионер отрячĕ йĕркелет, унăн пĕрремĕш вожатăйĕ пулать. Отряда харăсах 17-ĕн кĕреççĕ. Çав шутра А.Степанов, В. тата Н. Федоровсем, В.Павлов, Л.Осипов, П.Ильин, хăйĕн йăмăкĕ Марфа... А.Капитонов вĕрентекен ертсе пынипе пионерсем эмел курăкĕ пухаççĕ, пĕве пĕвелеççĕ, çамрăк артистсен кружокĕ уçаççĕ, спектакльсем лартаççĕ, вĕсем унта социализмпа çĕнĕ пурнăç тăшманĕсене вăрçаççĕ. Ачасем çинчен усал сăмах Колешшана та çитнĕ пулмалла. Шорккари пионерсем унта пыраççĕ кăна, хĕрлĕ галстуклăскерсене вăй питти çамрăксем хĕнеме пуçлаççĕ. Юрать-ха, ял çыннисем вилĕмрен хăтарса хăварнă ачасене.

"Çамрăк колхозник" хаçатăн 1930 çулхи июнĕн 8-мĕшĕнчи номерĕнче Шорккара Октябрь ачисен ушкăнне йĕркелени çинчен пĕлтернĕ. 1969 çулта П.Трифоновăн "Опыт краеведческой работы по истории в сельской школе" ятлă кĕнеки пичетленсе тухнă.

А.МОКИН.

Ыйту - хурав

## ПĔР ПАЙНЕ ÇЕÇ

***Социаллă пакетран пĕтĕмпех мар, калăпăр, пĕр пайне çеç илсе тăма юрать-и?***

Л.ФЕДОРОВА,
Çĕньял.

Пенсионерсем пĕлеççĕ ĕнтĕ, 2006 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа социаллă пакета тивĕçлисем ăна илсе тăмасса та пултараççĕ. Ăна илсе тăрас мар тесен РФ Пенси фончĕн территорири кашни уйăхра укçа тӳлевĕ парса тăракан управленине çулленех октябрь уйăхĕччен заявлени çырса памалла. Çав заявленире социаллă пакета пĕтĕмпех е унăн икĕ пайĕнчен пĕрне – е медицина, е транспорт пайне – илсе тăма килĕшменни çинчен ыйтса çырма пултаратăр.

Калăпăр, октябрĕн 1-мĕшĕччен эсир социаллă пакет илсе тăрас мар тесе Пенси фончĕн управление заявлени çырса парса ĕлкĕреймĕн е ятарласа çырса паман пулсан çитес çултан сире ăна саккунпа çирĕплетнĕ йĕркепе парса тăрĕç. Çавăнпа ăна илсе тăрас мар тесен сирĕн октябрĕн 1-мĕшĕччен çуллен заявлени памалла.

РФ Пенси фончĕн
районти управленийĕ.

## ЙЫВĂР ПУЛНИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРМЕН

Кӳкеçрин «Бичурин тата паянхи самана» музейре те Афган вăрçине хутшăннисене халалласа мероприяти йĕркеленĕ. 1-мĕш шкулти 8-мĕш класра вĕренекенсем Улатăркассинчи А.И.Иванов тавра пĕлӳçĕпе тĕл пулнă. Ахальтен мар, вăл – Афганистанра çапăçу хирĕнче 1986 çулта вилнĕ Олег Ивановăн ашшĕ. Музейре ачасем Олегăн сăн ӳкерчĕкĕсене, ялписене, çырăвĕсене интереслензсех пăхрĕç. Вăрçă тени çăмăл пулман. Анчах пирĕн ентеш пĕрре те нăйкăшман. Унăн çырăвĕсенче пĕринче те йывăр пулни çинчен калани çук. Вĕренекенсем салтак килтисене пăлхантарас мар тесе «кунта йывăр» тесе пĕр йĕрке те çырманнине, хăйĕн тусне вĕлернипе хăй ирĕкĕпе юнлă çапăçăва кĕнине пĕлсен ачасем Олегăн паттăрлăхĕнчен чăннипех те тĕлĕнчĕç.

Пирĕн районтан çак вăрçăра 6 çамрăк паттăрла вилĕмпе вилнĕ. «Каччăсен яланах тăван çĕре хӳтĕлеме хатĕр пулмалла, çавна май спортпа туслашмалла. Пĕр сăмахпа – çĕршыва юрăхлă гражданин пулмалла», – çакăн пек сĕнӳ пачĕç тĕл пулăва хутшăннă поселокри Б.Зуев воин-интернационалистпа А.Иванов тавра пĕлӳçĕ.

В.МАТВЕЕВА,
музей директорĕ.


«Халĕ эпĕ пиллĕкре. Ман алăра автомат. Хăвăртрах ӳссе çитсе çĕршыва сыхлас килет», – тет Арккассинчи Савелий Хламин.

К.МИХАЙЛОВА.

Страницăна Ю.МИХАЙЛОВ хатĕрленĕ.

Спорт хыпарĕсем

## ЙĔЛТĔРПЕ

Февралĕн 15-17-мĕшĕсенче Шупашкар хулинче иртнĕ Чăваш Республикин Чемпионатне йĕлтĕрпе чупма пирĕн районтан 25 çын хутшăннă. Йĕлтĕрçĕсен команди унтан иккĕмĕш вырăнпа таврăннă.

Вырсарни кун вара Чăваш Енри вырăнти самоуправлени тата патшалăх влаçĕн органĕсен ĕçченĕсем йĕлтĕр çине тăнă. Пирĕн районти пуçлăхсемпе специалистсем пур енпе те хутшăнса пынă. УКС ЖКХ пуçлăхĕ В.М.Сидоров лайăх результатпа савăнтарнă. Вăл ертӳçĕсен чупăвĕнче виççĕмĕш тухнă, пуçлăхсен çумĕсем хушшинче иккĕмĕш результат кăтартнă.

## ШАШКĂЛЛА

Шкул ачисем шашкăлла выляссипе спартакиада шучĕпе район первенствинче тупăшнă. Тĕп пĕлӳ паракан шкулсенчен Янăшсем, Тăрăнсем, Шăмăшсем призлă вырăнсене йышăннă. Вăтам пĕлӳ паракан шкулсенчен малти вырăнсене Тутаркассисем, лицей, Атайкассисем тухнă.

## ФУТЗАЛ

Çĕршыв хӳтĕлевçин кунне халалласа "Улăп" комплексра спортзалта футбол выляссипе районăн уçă турнирĕ иртнĕ. Унта 7 команда пирĕн районтан тата Пăва районĕнчи "Рунга" хутшăннă. Палăртма кăмăллă, Рункăсем пирĕн районпа тачă çыхăну тытаççĕ: стадион уçăлнине паллă тунă çĕре хутшăнаççĕ, Физкультурник кунĕнче те килеççĕ. Вĕсем хальхинче иккĕмĕш вырăна тухнă. Пĕрремĕшпе виççĕмĕш вырăнсенче – "Водстрой" ПМК тата "Воля" СК командăсем.

## АРМСПОРТ

Кӳкеçри культура керменĕнче алă вăйне тĕрĕсленĕ. 64 участник унта армрестлинг сĕтелĕ умне тăнă. Ачасенчен Т.Кириллова, С.Янаслова, Т.Иванова, М.Петрушина, Е.Чернов, А.Семенов, П.Кузьмин палăрнă. Ял тăрăхĕсемпе пăхсан, малтисен ретĕнче – Кӳкеçсем, Çырмапуçсем, Вăрман-Çĕктерсем.

А.АРДАЛИОНОВА.

## ПУЛАСЛĂХĔ ИЛĔРТЕТ

Лапсар ял тăрăхĕнчи Ойкассинчен Çĕньяла кăçал асфальт çул (2 çухрăм майлă) хывмалла, пĕлтĕр кунта хăйăрпа вĕт чул сарса тухнă. 2,5 çухрăмри Кӳкеçе çити асфальт çул сарма та проект хатĕр. Çак ĕçсене пурнăçласан Ойкассинче пурнăç пушшех лайăхланасса шанаççĕ. Ял хуларан, райцентртан инçе мар, кунта клуб, фельдшерпа акушер пункчĕ, газ пур, 88 кил шутланать, 294 çын (çав шутра ĕçлекенни 175) пурăнать. Культура çуртĕнче час-часах уявсем иртеççĕ. 2007 çулта ăна юсаса 250 пин тенкĕ тăкакланă. Кăçал ялта тепĕр пуçă тутарма хулари организацие укçа куçарнă, шăтăк чавма килессе кĕтеççĕ.

Ырă ĕçсен çулталăкĕнче çакна пĕлтерес килет: Хĕрлĕçырта çуралса ӳснĕ А.М.Исаева, РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕ, Ойкассинчи клуба 18 çемçе пуканпа 2 сĕтел, Çĕньялта çуралса ӳснĕ А.Е.Орешников, хулари ВНИИР снабженецĕ, 80 çемçе пукан парнеленĕ. Ойкассисем çак хыпара пĕлсен: «Тĕнче ырă çынсемсĕр мар иккен», – тесе тĕлĕннĕ, вĕсене тав тунă. Нумаях пулмасть клубра Лапсар ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Е.В.Афанасьев администраци 2007 çулта пурнăçланă ĕçсем çинчен отчет туса панă, кăçал пурнăçламалли ĕçсен планĕпе паллаштарнă.

С.СЕРЕГИН.

## ÇИВИТТИНЧЕН ЮР АНТАРАÇÇĔ

Ку эрне йĕпе юр çунипе пуçланчĕ. Унта та кунта тăрăсенчен юр шуса аннине курма пулать. Инкек пуласси те инçе мар. Çавăнпа май май килнĕ таран çивиттисене юрсенчен тасатма тăрăшаççĕ. Ытлари кун ӳкернĕ фото çинче çакă лайăх курăнать. «Конечка» енне каякан çул аяккипе вырнаçнă çуртсемпе «Поиск» подрядлă организаци «ĕçлет». А.С.Андреев, Н.С.Федотов, Г.А.Кондратьев слесарьсем çурт тăррисенчен юр антараççĕ.

«Нумай хутлă 20 ытла çурт пирĕн çинче тăрать. Шуса анакан, тăрăран тухса тăракан юра катса тухатпăр. Чи малтан çынсем çӳрекен вырăнта ĕçлетпĕр», – терĕç вĕсем.

А.СУСМЕТ.



Фото ӳкерчĕкĕ авторăн.

## КИЛ УРЛĂ ТЕНĔ ПЕК МАШИНА

«Çынсем вертолет туянма пуçласан эпир те машина илĕпĕр-ха, – шӳтлетчĕ ачаран пĕлекен пĕр пĕлĕшĕм. Паян вăл та машиналлă. Чаплă та хаклă йышши «иномарка» мар та, анчах хăйĕн «копейкипе» еплерех кĕрлеттерсе чупать ял тăрăх! Тăватă ураллă тусĕ пулăшнипе пасара час-час хутлать: ăна-кăна сутать. «Нива» илесшĕн-ха, унпа яла кĕрсе тухма лайăх», – ĕмĕтне пытармасть вăл.

Çапла, юлашки вăхăтра машина шучĕ Раççейре ӳссе пырать. Çакна асăрхама нумай сăнани кирлĕ мар. Кил урлă тенĕ пек машина пур паян çынсен. Иртнĕ çул çеç çĕршывĕпе 2 миллион та 800 пин машина туяннă иккен. Ку вăл Мускаври машина йышĕпе танлашать. Раççейĕн автомобиль паркĕ пĕр çулта çеç 35 процент хушăннă. Çĕршывĕпе паян 38 миллион ытла машина. Совет самани вăхăтĕнче вара пин çын пуçне 30 автомобиль тивнĕ. Ун чухне пурĕ 12 миллион машина пулнă.

Тепĕр интереслĕ факт та кăсăклă пуласса шанатпăр. Нумай хваттерлĕ çурт тунă чухне Совет саманинче 100 хваттер пуçне 3 машина валли вырăн тесе шута илнĕ. Паян вара кашни 10 çын пуçне 3 ытла машина тивет.

В.ТИТОВА.

## ФЕСТИВАЛЕ ХУТШĂННĂ

Оборонăпа массăллă тата спорт уйăхлăхне хутшăнса Тутаркасси шкулĕнчи вокал ансамблĕ Çĕнĕ Шупашкарта иртнĕ патриотла юрăсен «Раççее юратса» фестивальне хутшăнчĕ.

Тутаркассисене ахальтен суйласа илмен. О.Матина ертсе пыракан ушкăн çулсерен «Район ахахĕсем» конкурсра призлă вырăнсене йышăнса пырать. «Юхтăр, юрă» районти конкурсра та палăраççĕ вĕсем. Кăçал та «Вокал ансамблĕсем» номинацире гитарăпа вылякан хĕрсем пĕрремĕш вырăна тухрĕç.

А.АЛИНИНА.

Кăштах кулăш

## АРĂМНЕ КАЛАМА ХУШНĂ

20-30 çул каялла районти пĕр кайăк-кĕшĕк фабрикине тĕрĕслеме сумлă комисси пырса çитет. Хулăн папкăллăскерсем предприятири ĕçхĕлпе хытах кăсăкланаççĕ, продуктивлăх пирки ыйтса пĕлеççĕ, рацион çинчен калаçаççĕ. Ĕçлĕ йышра пĕрин арăмĕ те пулнă. Хайхискер фабрика директорĕ çумне йăпшăнса пырса тăрать те хăюсăртараххăн çапла калать: «Каçарăр та, ман сирĕнтен ыйтса пĕлмелли пур-ха...» «Тархасшăн, тархасшăн», – тавăрать предприяти пуçлăхĕ. «Мĕнле калас та, – пуçне именчĕклĕн чиксе малалла калаçать хайхи хĕрарăм-тĕрĕслевçĕ. – Сирĕн автанĕсем кунне миçе хутчен пусаççĕ вара?» «Питĕ тĕрĕс ыйту. Питĕ вырăнлă ыйту, – хуравлать фабрика директорĕ. – Кунне ним мар тăхăр хут пусаççĕ. Кăмăлĕсем лайăх чух – вун виççĕ те». Шухăша самай путать хĕрарăм, унтан: «Апла эсир çакна ман упăшкана калăр-ха», – ыйтать хайхискер директора.

Директор тĕрĕслевçĕ-хĕрарăмăн упăшки патне утса пырать те ăнлантарать: «Сирĕн арăмăр автансем чăха кунне миçе хутчен пуснипе кăсăкланчĕ. Эпĕ тăхăр хутчен терĕм, кăмăлĕсем лайăх чух вун виççĕ те пуснине пĕлтертĕм», – тет. «Чăнах-и?» – тĕлĕнмеллипех тĕлĕнет тĕрĕслевçĕ-арçын. Ĕнсине кăтăрт-кăтăрт хыçса илнĕ хыççăн малалла кăсăкланать: «Вĕсем вара пĕр чăха пусаççĕ-и е тĕрлине?». «Çакăн чухлĕ чăх пур çинче пĕр чăха пусма ухмах-им вĕсем!» – маçлăн хуравлать фабрика директорĕ. «Вăт кăна эсир ман арăма калăр-ха», – çиййĕнчех хушса хурать районтан килнĕ тĕрĕслевçĕ-арçын.

В.ЭВЕРККИ.

Хурал служби

## 307-ШНЕ ТЫТСА ЧАРТĂМĂР

Районти шалти ĕçсен пайĕ çумĕнчи ведомство тулашĕнчи хурал пайĕн сотрудникĕсем кăçалхи январь уйăхĕнче этем пурнăçĕпе сывлăхне хирĕçле тунă тата пурлăх вăрланипе çыхăннă 2 преступлени, административлă право йĕркине пăснă 185 тĕслĕх тăрă шыв çине кăларнă. Преступлени тума пултарнă тесе 3 çынна арестленĕ, административлă право йĕркине пăснăшăн 185 çынна тытса чарнă. Февралĕн 20-мĕшĕ тĕлне вара ăна пăхăнманшăн пурĕ районта 307 çынна тытса чартăмăр. Кунсăр пуçне эпир пăхса тăракан тата пăхса тăман объектсене инженерипе техника тата терроризм хăрушсăрлăхĕ тĕлĕшĕнчен 7 объекта тĕрĕсленĕ, çитменлĕхсене пĕтерес тĕллевпе ертӳçисене васкавлăн пурнăçламалли ĕçсене кăтартнă.

Г.МОСКОВЦЕВ,
ведомство тулашĕнчи хурал пайĕн пуçлăхĕ.

## ОБЪЯВЛЕНИЯ. ПĔЛТЕРӲСЕМ

☎ 2-13-80

*ООО «Рыболов» и кафе «Веселый Роджер»*

**1 марта 2008 г.**

**«Гуляй, масленица!»**

*Проводят конкурс самодеятельных артистов.*

**В номинациях:**

- игра на гармони, баяне, аккордеоне;
- балалайке;
- скрипке и др. муз. инструментах;
- народный ансамбль;
- лучший исполнитель частушек;
- лучший исполнитель народной песни;
- самый оригинальный номер;
- самый молодой участник;
- самый старший участник;
- лучший танцор.

ПРИГЛАШАЮТСЯ ВСЕ ЖЕЛАЮЩИЕ ОТ 1 ГОДА ДО 99 ЛЕТ!

*ПОБЕДИТЕЛЕЙ ЖДУТ ПРИЗЫ!*

**Регистрация участников проводится по адресу: *п.Кугеси, ул.Шоршелская, д.7, кафе «Веселый Роджер»*.**

***В программе:***

- театрализованное представление;
- КОНКУРС самодеятельных артистов;
- игры, конкурсы, забавы;
- чай, кофе, блины, шашлык;
- ярмарка продуктов.

*Приглашаем всех! Начало в 12 часов.*

*Администрация.*

**29 февраля в 18.00**

**В зале филармонии юбилейный концерт засл. артиста ЧР ВАСИЛИЯ РАЙМОВА**

Участвуют: Чув.гос. ансамбль песни и танца, звезды чув.эстрады: Л.Семенова, А.Сарри, А.Московский, сестры Малины, В.Телей, В.Клементьев, Г.Смирнова, В.Семенов и др.

*Касса: 62-27-27.*

***25 февраля в районе остановки «Байсубаково» пропала собака (сука) рыжего окраса, такса. Огромная просьба помочь в поисках за вознаграждение. Позвонить по телефонам: 8-903-379-73-30, 66-81-39.***

**Ишлейский кирпичный завод:**

- выписывает кирпич со скидкой до 10 марта.
- приглашает бухгалтера с в/о, до 25 лет.
- набирает монолитчиков на строительство высотных домов в Н.Новгород.

*Тел.: 31-4-27, 44-80-50, 89063851347.*

**Поправка.** В газете «Тăван Ен» № 10 от 30.01.08 г. в объявлении о продлении срока аренды земельного участка вместо слов «11 месяцев» следует читать «на 3 года» и далее по тексту.

ТĂВАН ЕН
("КРАЙ РОДНОЙ")
Чебоксарская районная газета

Учредители:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики,
РГУ "Редакция Чебоксарской районной газеты "Тăван Ен",

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу 8 ноября 2005г. ПИ №ФС 18-2477

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю – по средам и субботам.

Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

Дежурный по номеру: В.Т.ИВАНОВА.

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, отдел сельского хозяйства, отдел писем, отдел общественно-политической жизни - 2-21-88, бухгалтерия - 2-13-80, 2-12-59. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru

Номер отпечатан в ГУП «ИПК «Чувашия». Тел.21-00-23.

Печать офсетная. Объем 1,0 печ. лист.
Номер подписан в печать: 26.02.2008 г. в 16 час. 00 мин.
Тираж 2530. Заказ №
Индекс газеты - 54820.